Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение
«Новомуратская средняя общеобразовательная школа»
Комсомольского района Чувашской Республики

Борисов
Альберт
Соломонович

Подписано цифровой подписью: Борисов Альберт Соломонович
DN: 1.2.643.3.131.1.1=120C323130383030353130343131, 1.2.643.100.3=120B3031313931363535373239, email=svetashemekeeva@mail.ru, c=RU, st=Чувашская Республика - Чувашия, l=д.Новые Мураты, o=МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ "НОВОМУРАТСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА" КОМСОМОЛЬСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ, givenName=Альберт Соломонович, sn=Борисов, 1.2.840.113549.1.9.2=1.2.643.3.61.1.1.6.502710.3.4.2.1, cn=Борисов Альберт Соломонович
Дата: 2021.04.03 08:55:42 +03'00'

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА
# по родному (чувашскому) языку
# начального общего образования
# 1– 4 классы

Разработана на основе программы общеобразовательных учреждений
по родному (чувашскому) языку в 1-4 классах под редакцией
Т.В.Артемьевой, М.К. Волкова, Л.П. Сергеева (1класс)
Л.П. Сергеева, Т.В.Артемьевой, А.Р.Федоровой (2 класс)
Л.П. Сергеева, Т.В.Артемьевой, А.Р.Кульевой (3 класс)
Ю.М. Виноградова, А.Р.Кульевой (4 класс)

д. Новые Мураты

Приложение
к основной образовательной программе
начального общего образования
МБОУ «Новомуратская СОШ»
Комсомольского района
Чувашской Республики

# Ăнлантару çырăвĕ.

Пуçламăш шкул вĕрентĕвĕн çĕнĕ патшалăх федераллă вĕренӳ стандарчĕ (приказ МО и НРФ от 06.10 2009 № 373) Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программи (чăваш шкулĕн 1-4 класĕсем валли. М. К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р.Кульева. - Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви 2013).

Ку программăна 1-4 класра вĕренекен ачасем валли хатĕрленĕ.

## ПРЕДМЕТĂН ПУЛАС РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

**Ачасенчен кĕтекен результатсем.**

Пуплеве пур енлн аталантарнă май чĕлхене ансат тишкерме, терминсемпе усă курма вĕрентесси

Предметăн пайрам результачĕсем:

- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине, сасăсем хытă тата çемçе пулнине, сăмахсене пĕр йĕркерен теприне мĕнле куçармаллине пĕлни;
- 35-40 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырни;
- 25-30 сăмахлă текста итленипе (диктант) çырма пĕлни;
- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма;
- çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;
- çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юханшыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
- япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама-пултарни;
- предложенин тĕп членĕсене – подлежащипе сказуемăя – тупма пĕлни;
- ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вĕренни;
- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пĕлни;

30-45 сăмахлă текст тăрăх ыйтусене хуравласа изложени çырма;

2-3 предложениллĕ текст тума пултарни.

**Харкамлăх результачĕсем**

- тăван чĕлхене хаклама, хисеплеме хăнăхса пыни;
- кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи, вăл ыттисенчен уйрăлса тăнине ăнланни;
- чĕлхепе кăсăкланма пуçлани, харпăр хăй пуплевне лайăхлатас кăм*ăл*-туйăм амаланни

Пур предмета та вĕрентнĕ май кĕтекен результатсем:

- пулăмсене тарăнрах ăнланма вĕренсе пыни
- ăнлавсене уçăмлама, ушкăнлама хăнăхса пыни
- тишкерӳ-пĕтĕçтерӳ, танлаштару хăнхĕвĕсем çирĕпленсе пыни

**Предметăн пулас результачĕсем**

**Пĕлӳлĕх(познавательные) результачĕсем:**

- çырнă чух мĕнле лармаллине тата çыру хатĕрĕсемпе мĕнле усă курмаллине пĕлни;
- таврари япаласене, пулăмсене тĕпчес ăнтăлав аталанни;

- таврари япаласемпе пулӑмсем ҫинчен мӗн пӗлнине системӑлани: «Тӑван ҫӗр-шыв» ӑнлава усӑмлани. Вӑл ҫуралнӑ вырӑн, тӑван ял, тавралӑх, хӑй пурӑнакан республика тата ҫӗр-шыв (Раҫҫей) пулнине ӑнланни, унӑн культури, мухтавлӑ ҫыннисем ҫинчен пӗлни; ҫут ҫанталӑк законӗсем, япаласемпе пулӑмсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса аталаннине курни;

- тавралӑх енӗсене, япалан вырӑнне кӑтартма, тавралӑхри вырӑнне палӑртма пӗлни;

- япаласен пӗрпеклӗхне, уйрӑмлӑхне, вӗсем мӗнпе уйрӑлса тӑнине курма, палӑртма пултарайни;

- ачан тавракурӑмӗ анлӑланни, ҫут ҫанталӑкри пулӑмсем, ҫулталӑк вӑхӑчӗсем, ҫемье, чӗр чунсем, ачасен пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен тӗплӗнрех пӗлни, тӗнче курӑмӗ йӗркеленсе пыни;

- туйӑм культури ҫивӗчленни, кирлӗ вӑхӑтра пулӑшма, мӗн тумалла, мӗнле тумаллине тавҫӑра пуҫлани;

-пысӑк, пӗчӗк, тан усӑлӑха курни, логикӑллӑ шайлаштарайни;

- вӗренӳ хатӗрӗсенче кирлӗ материала шыраса тупма пӗлни;

- вӗренӳ хатӗрӗсенче панӑ символсене, модельсене, схемӑсене, паллӑсене ӑнланни;

**Йӗркелӳ-хаклав(регулятивные) результачӗсем**:

- тантӑшӗсен тата харпӑр хӑй ӗҫне тищкерейни тата пахалайни;

- тишкерӳ - пӗтӗҫтерӳ ӗҫне хӑнӑхни, пӗтӗмӗшлине пайсем ҫине уйӑрма, пайӗсене пӗтӗҫтерме пӗлни;

- тӗрӗс курма, япаласен усӑлӑхри вырӑнне палӑртма пултарни;

- хӑйӗн ӗҫне вӗрентекен, юлташӗсем хакланине йышӑнни;

- вӗрентекен, класпа пӗрле палӑртнӑ задачӑна татса памалли тӗрлӗ майсем тупни;

- хӑвӑн шухӑшна ӑнлантарса парайни;

- йӑнӑша курма, пӗр-пӗрне йӑнӑш тӑвасран асӑрхаттарма вӗренни;

- ӗҫ йӗркине, мӗн хыҫҫӑн мӗн тумаллине, мӗншӗн ун пек тумаллине тавҫӑрни;

- ӗҫӗн кашни тапхӑрне вӗрентекен пулӑшнипе хак парса пырайни;

- харпӑр хӑй ӗҫне планлама пӗлни.

**Хутшӑну(коммуникативные) результачӗсем:**

- шухӑша тӗрӗс те усӑмлӑ, ҫыхӑнуллӑ каласа пама тӑрӑшни;

- текстпа ӗҫлеме пӗлни, вулани ҫинчен ҫыхӑнуллӑ тата усӑмлӑ каласа пама тӑрӑшни;

- ачан пуплевӗ, йӑнӑша курма, пӗр-пӗрне йӑнӑш тӑвасран асӑрхаттарма вӗренни;

-пуплев культури аталанни: пӗр-пӗр япала, пулӑм, ӗҫ ҫинчен ҫыхӑнуллӑ, кирлӗ сӑмахсемпе усӑ курса каласа пама пултарни; юлташпа, аслисемпе, ваттисемпе мӗн ҫинчен тата мӗнле сӑмахсемпе усӑ курса калаҫмаллине ӑнкарни, кампа калаҫнӑ чух, хӑҫан, мӗнле сӑмахсемпе (сывлӑх сунни, тав туни, сывпулашни) усӑ курмаллине тавҫӑрни;

- ҫывӑх, хирӗҫле, пӗр пӗлтерӗшлӗ, нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене тӗрӗсрех, тарӑнрах ӑнланни, вӗсен ретӗнче кирлине суйлайни;

- сӑмахсен куҫӑмлӑ пӗлтерӗшне ӑнланни;

- чӑваш чӗлхинче сӑмахсен предложенире ҫирӗп йӗрке пуррине ӑнланни, ӑна пуплеври тытса пырайни;

- каласа парассин тӗрлӗ тӗсӗсене (калав, сӑнлав, уйлав) пӗлни. Вӗсен тытӑмӗпе уйрӑмлӑхӗсене курма, калавӑн тӗрлӗ тӗсне йӗркелеме пултарайни;

- калав темине, тӗп шухӑшне палӑртайни;

- хутшӑну пуплев\ (диалог) тытӑмне, унти предложенисен хӑй евӗрлӗхне (ытларах тулли мар предложенисем) пӗлни. Диалог шалашӗ пӗр темӑна, пӗр тӗп шухӑша пӑхӑнса тӑнине ӑнланни. Майӗпен хутшӑну пуплевне тӗрлӗ пуплев ситуацийӗсенче усӑ курма пултарни;

- ушкӑнпа ӗҫлеме пӗлни;

- сӑмах йышӗ пуянланни;

- ҫынсем тӗрлӗрен шухӑшлама пултарнине ӑнланни.

Ача пуплевӗнчи тӗп ӗҫ - хӗлсене (тӑнлассине, калаҫассине, вулассине, ҫырассине) аталантарса пынипе пӗрлех тӑван чӗлхе вӗрентнӗ чух ҫак тӗллевсене пурнӑҫламалла:

Вӗрентекенсен ҫынлӑх туйӑмӗсене вӑйлатмалла, пурнӑҫа юратма, ырра шанса тӑма тата хӑйсене те ырӑ кӑмӑллӑ, сӑпайлӑ пулма хӑнӑхтармалла;

Ачасем таврари пурнӑҫ, этемпе ҫут ҫанталӑк ҫинчен мӗн пӗлнине анлӑлатмалла;

Ачасен ҫыхӑнуллӑ тата сӑнарлӑ шухӑшлӑвӗпе асне, асӑмлас хевтине аталантармалла;

Вӗренӳ ӗҫ-хӗлне лайӑхрах хӑнӑхтарса, унӑн ӑслайӗсене «алла илме» май туса памалла; вӗренӳ вӑхӑчӗпе перекетлӗ усӑ курма, харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлессин ансатрах мелӗсене чухлама вӗрентмелле;

Тӑрӑшуллӑ та тимлӗ вӗренме, пӗлӳпе пурнӑҫ тӗслӗхӗсен ҫӑл куҫӗпе – кӗнекепе кӑсӑкланма хӑнӑхтармалла.

## ПРЕДМЕТӐН ШАЛАШӖ (СОДЕРЖАНИЙӖ)

Тин ҫеҫ шкулта вӗренме пуҫланӑ ачасене хутла вӗрентесси кӑткӑс ӗҫ. Сас паллисене ӑса хывма, сыпӑнтарса вулама, вӗсене ҫырма хӑнӑхтарма, ҫавӑнтах вулама-ҫырма вӗрентесси 1-мӗш класра вӗренӳ ҫулӗ тӑршшӗпе пулса

пырать. Вулама-çырма вĕрентмелли уроксем эрнере 4 пулмалла. Еç ăнаçлăрах пултăр тесе меслетçĕсем ăна тапхăрăн йĕркелеме сĕнеççĕ: букварь умĕнхи тапхăр, букварь тата букварь хыççăнхи тапхăрсем.

Хатĕрлев тапхăрĕ

Хатĕрлев тапхăрĕ икĕ эрне тăсăлать. Ку тапхăра ытларах тăсни вулама-çырма вĕрентес вăхăта кĕскетни пулать пулин те, ачасем шкулта хутла вĕренме мĕн таран хатĕррине шута илсе учитель хатĕрлеве ытларах вăхăт уйăрма та пултарать. Ку тапхăрта малти вырăнта пĕлӳ илесси мар, хăнăхусем туянасси пулмалла.

*Сас паллисем вĕреннĕ тапхăр*

Ку тапхăр çав тери яваплă: ачасен вулас-çырас ăсталăх никĕсĕ хывăнать. Сак ĕç çĕнĕлĕхĕпе вĕсен вĕренӳри пулас çитĕнĕвĕсем тачă çыхăннă.

Эпир вулама-çырма вĕрентме усă курма сĕнекен меслете талккишлĕ анализ-синтез меслечĕ теме пулать. Вăл XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчех сарăлса çирĕпленнĕ сасă анализ-синтез меслечĕн варианчĕ.

Тапхăр сентябрь çурринчен пуçласа апрель вĕçĕ таран тăсăлать.

*Сас паллисем вĕреннĕ хыççăнхи тапхăр*

Ку тапхăр тăван чĕлхери пур тĕп сасăсемпе, вĕсен сас палийĕсемпе паллашнă хыççăн пуçланать те вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен тăсăлать. Тапхăрăн тĕп тĕллевĕ _ ку таранччен харпăрланă ăслай-хăнăхусене, ăнланусене çирĕплетесси, пуплев ĕç-хĕлĕн пур енĕсене те малалла аталантарасси, çивĕчлетесси.

Сасăсемпе сас паллисем.

Вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсем çинчен ачасем 1-2 классенчех пĕлеççĕ. Сасăсем уçă тата хупă, хытă тата çемçе, янăравлă тата янăравсăр пулнине палăртма вĕренеççĕ, сыпăк, пусăм ăнлавсемпе паллашаççĕ, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас пали тытăмне тишкереççĕ. Вулама-çырма вĕренмелли кашни урокрах ачасем пуплевĕн ансаттĕслĕхĕсене пăхса тухаççĕ, çавна май фонетика терминĕсемпе усă курма та хăнăхаççĕ. 2 класра фонетикăпа графика тишкерĕвĕ тĕрĕс çырма вĕрентессипе тата пуплев кăлтăкĕсене юсассипе çыхăнать.

3-4 классенче ачасен çак пĕлĕвĕсемпе ăслайĕсем, хăнăхăвĕсем малалла аталанаççĕ. Вĕсен пуплеве тăнлас-итлес сисĕмĕ çивĕчленет, сăмахăн сасăпа сас пали тытăмне чухласси лайăхланать. Ку тапхăрта фонетикăпа графика тишкерĕвĕпе усă курнин тĕп тĕллевĕсем- йăнăшсăр çырса илес, илтнипе çырас, çырнине тĕрĕслес ăслайсене вĕрентесси, тĕрĕс çырас хăнăхусене лайăхлатасси.

Тĕпрен илсен, фонетикăпа графика тишкерĕвне вĕрентнин тĕллевĕсем 1 класра та, 2-4 классенче те пĕрешкел: ачасем сасăсене ăнланса уйăрма, вĕсене тăван çырулăхра йышăннă пек палăртма вĕренмелле. 1 класс пĕтернĕ тĕле вĕсен çакна пĕлмелле: каланипе çырни хушшинче турĕ шайлашу çук, сăмахри сасăсемпе сас паллисен йышĕ пур чухне те пĕр пек маар, чылай сас паллин темиçе пĕлтерĕш пулать (сăмахран, хытă хупă сасса та, çемçине те пĕр пекех палăртатпăр: ут-ут, сăн-сĕн), хăш-пĕалли икĕ сасса палăртать (яка, юрă, ешчĕк), тепĕр чухне пĕр сассах икĕ сас пали çырса палăртатпăр (кукăль, мăкăнь, вулать).

2 класра вырăс чĕлхинчен кĕнĕ хăш-пĕр сăмахсене калассипе, çырассипе паллаштарма пуçлатпăр. Кунсăр пуçне ачасем чăн чăваш сăмахĕсенчи вăрăмланнă сасса илтме, ансат тĕслĕхсенче ăна икĕ пĕр пек сас пали çырса палăртма вĕренеççĕ, илтнипе (диктант) Сырма хăнăхаççĕ.

3-4 классенче тĕрлĕрен хăнăхтару пурнăçланă май вĕренекенсем тĕс çырассин йывăрлăхĕсене асăрхама-туйма, орфографин чылай правилипе усă курма пуçлаççĕ. Çапла вара, сăмахăн сасăпа сыпăк тытăмне тишкерес хăнăхусене лайăхлатса пырса, вĕсене сăмахăн пĕлтерĕшлĕ пайĕсене асăрхамалли хăнăхтарусемпе çыхăнтарса ачасен тĕрĕç çырас мехелне вăйлатсах пыртпăр. Унсăр пуçне фонетикăпа графика тишкерĕвĕ ачасен пуплев культурине лайăхлатассипе тачă çхăнмалла.

Сăмах.

Пуçламăш шкулта вĕренекенсен сăмах йышне пуянлатассине тăватă çулĕпех тĕп тĕллевенсен пĕри те6се шутламалла. Ку тĕллеве пуплеве пур енлĕн аталантармалли уроксенче тĕрлĕ хăнăхтарцу тутарса пурнăçламалла. Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана, пулăма, вĕсен ĕçне т.ыт.те.палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май пурине ачасем чĕлхе теорине туррĕн вĕренсе маар, тĕрлĕ хăнăхтару, сăнавсем тунă май куç кĕрет курмалла. Вĕсем шухăша тĕрĕсрех палăртакан сăмахсене суйлама вĕренсе пыраççĕ, сăмах йышĕ пуянланса пырать, унпа усă курасси лайăхланать.

2 класра сăмах тытăмĕпе паллаштарма пăхна. Анчах ку терминсемпе паллаштаричченех сăмахсем пĕлтерĕшлĕ пайсенчен тăнине асăрхама пулăшакан, вăл е ку пĕлтерĕшлĕ пай пурине кура сăмахăн пĕлтерĕшне тавçăрма вĕрентекен хăнăхтарусемпе усă курмалла. Çакă ачасен сăмах йышне пуянлатас ĕçре пысăк вырă йышăмалла.

3 класра сăмах тытăмне туллинрех вĕренме палăртнă. Вулав тата çыру хăнăхтарăвĕсем пурнăçланă май вĕренекенсем ансат тĕслĕхсенче сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене асăрхама пуçлаççĕ, çапла вара вĕсем сăмахпа сăмахăн форми хушшинчи уйрăмлăха курма хăхаççĕ.  Сăмах тытăмне тишкерме хăнăхни ăна мĕнле çырмаллине тавçăрма, çрнине тĕрĕсленĕ чух çак ăслайпа усă курма май парать. Вырăс чĕлхинчен кĕĕ сăмахсенче б, г, д, ж, з, ё, о, ц, щ сас паллисем çратпăă сасă икĕ уçă сасă вăрăммăн илтĕннĕ чух та ăна час-часах вырăс чĕлхинчи евĕр пĕр сас паллипех паллă тăватпăр (парта, Саша, математика), пуçламăш формăра сăмах вĕçĕнчи (ă) сасса, а е я çырса палăртатпăр (Нина, Галя).

Сăмахсене пĕлтерĕшĕ енчен ушкăнласси-тишкерессси ерипенех вĕсен улшăну мелĕсене сăнассипе çыхăнса каять. Пуçламăш классенче ачасем пилĕк тĕп пуплев пайне уйăрма вĕренеççĕ: япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ, хисеп ячĕ, ылмаш (местоимении). Пуплев пайĕсене уйăрмалли мелсемпе вĕсем пуплев пайĕсен терминĕсемпе паллашиччен чылай малтан паллашма тытăнаççĕ.

Программăра палăăуплев пайĕсене вĕренекенсем лексика пĕлтерĕшне, ыйтăвĕсене тата улăну мелĕсене кура уйăрма хăнăхмалла. Ку тĕллеве пурнăçласси виçĕ тапхăра тăсăлать. 2 класра вĕренекенсем япалана, ĕçе, вĕсен паллисене пĕлтерекен сăмахсен ыйтăвĕсене калама хăнăхаççĕ, сăмахсене вĕсем мĕнле ыйтурине кура ушкăнлама тытăнаççĕ. 2 класра вĕсем япала ячĕ, глагол, паллă ячĕ, ылмаш терминсемпе усă курма хăнăхмалла. Ылмаш тесе ку класра сăпат ылмашне калаççĕ. Хыç сăмахсемпе союзсем çинчен ятарласа вĕренмеççĕ, анчах та вĕсем уйрăм сăмахсем пулнине туйма, вĕсене уйрăм çрма хăнăхтарса пымалла.

3 класра вĕренекенсене япала ячĕсем улшăннине, вĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче пулнине, ытти сăмахсемпе çыхăннă чух тĕрлĕ аффикс йышăнма пултарнине тĕслĕхсемпе кăтартса памалла. Укĕм (падеж) терминпа паллаштармалла маар, апла пулин те ачасем укĕм аффиксĕсем йышăннă япала ячĕсен ыйтăвĕсене лартма вĕренсе çитмелле. Еç-хĕлсене, вĕсем хăш вăхăтрине, паллă ячĕсене тĕĕ хăнăхтару тунă чух пĕлтерешпе ыйтăвне кура палăртма хăнăхмалла. Шут хисеп ячĕсен туллии тата кĕске формисене тĕрĕс çырма хăнăхтармалла, ку пуплев пайĕн кĕске формисене япала ячĕсемпе çыхăнтарма, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентсе пымалла.

4 класра маларах вĕреннĕ пуплев пайĕсемпе паллаштарма, япала ячĕсем мĕнле укĕмрине чухлама, терминпа усă курма хăнăхтармалла. Сăпатланă май сăпат формисемпе пĕрреллĕ тата нумайлă хисепсенче тĕрĕс усă курма, вĕсене тĕрĕс калама тата çырма вĕрентмелле. Тĕрлĕ укĕмри япала ячĕсене сăпат ылсашĕпе ылмаштарнине сăнаттарса ку мелпе пуплевре усă курма хистемелле.

Паллă ячĕсем çинчен те 4 класра вĕренекенсене çĕĕ пĕлу памалла. Уйрăмаъх вăйлă степеньри ем-ешĕл, сап-сарă, кăн-кăвак йышши паллă ячĕсене тĕрĕс çырассине тимлемелле.

Грамматика формисем.

Пуплев пайĕсем пирки çулерех каланисĕр пуçне кашни класрах уйрăмах тимлемелли грамматика формисен шутĕнче- япала ячĕсен камăнлăхне (сăпатна) палăртасси, пулăшу пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсен тăтăшрах тĕл пулакан укĕм формисем.

Предложени.

Кĕççĕн классенче вĕренекенсен: 10 предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура – кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен; 2) предложении членĕсем çичен; 3) предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çичен; 4) предложени сăмах майлашăвĕсенчен тăни çинчен пĕлмелле. Çак ăнлавсемпе ачасене 4 çул хушшинче ерипен паллаштарса çитермелле.

1 класра ачасем предложение пуплевре асăрхама, ăна сăмахран уйăрма, ăна çырма, пысăк сас паллинчен пуçлама, вĕçĕнче пăнчă лартма вĕренеççĕ.

2 класра предложении вĕçĕче, пăнчăсăр пуçне, ыйту е кăшкăру пали лартассипе паллашаççĕ, уйрăм сăмахсене палăртса калама, предложении вĕçĕнчи паллăпа тивĕçуллĕ интонации тума хăнăхаççĕ.

3 класра вĕренекенсем предложении пуплев тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ, интонацине кура – кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен пĕлмелле, предложенин çак тĕсĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхмалла.

4 класра ачасем пĕр йышши членлă предложенисемпе паллашаççĕ. Ку предложенисене тĕрĕс интонаципе калама, вĕсемпе калаçура тата çырура усă курма, пĕр йышши членсене çырура хуреллĕ пăнчăпа уйăрма вĕренмелле.

Предложени членĕсемпе паллашасси 2 класран пуçланать. Ачасем кам е мĕн çинчен тата мĕн каланине палăртакан сăмахсене тупма вĕренеççĕ. 3 класра кĕçĕн членсем терминпа усă курма тытăнаççĕ.

Тĕрĕс çырма вĕрентесси кулленхи словарь ĕçĕпе, фонетика, морфологи тата синтаксис хăнăхтарăвĕсемпе тачă çыхăнмалла.

Çыхăнуллă пуплев.

Кĕçĕн çулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕсенчен килет. Çавна кура çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе çыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна çрасси те кашни класрах тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Кĕçĕн классенче вĕренекенсен çхăнуллă пуплевне аталантарасси, пĕтĕмĕшле илсен, çыхăнуллă текст тума вĕрентессипе пĕр килет. Вуланă е итленĕ калав, выляса кăтартнă диалог- ачасемшĕн çавăн евĕр текст тумалли тĕслĕхсем.

Çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсене вулав урокĕсенче те, чĕлхе урокĕсенче те ирттермелле, вĕсене сăмах вĕççĕн каласа та, çырса та пурнăçламалла. Чĕлхе урокĕсенче, тĕпрен илсен, изложенисемпе сочиненисем, вулав урокĕсенче вара сăмах вĕççĕн тумалли ĕçсем ытларах сĕнмелле.

Ачасене текст ăнлавпа паллаштармалла, текстăн тытăмне сăнаттармалла, ансат текстсем тума вĕрентмелле. Çак ĕçре тĕрлĕ мелпе, курăм хатĕрĕсемпе анлăн усă курмалла.

Ăславлă (творчествăллă) çыру урокĕсем.

Программăри тăван чĕлхе курсĕнче ятарласа ăславлă çыру урокĕсем палăртнă. Вĕсене 2 класран пуçласа икĕ эрнере пĕрре ирттермелле.

Çыру урокĕсене тĕллевлĕ те тухăçлă ирттерес тесен кашни вĕрену чĕрĕкĕнче миçе изложенипе сочинени ирттермеллине, вĕсенчен хăшĕсем сăмах вĕççĕн тата çырса пурнăçламаллисем пулмаллине, текст тума вĕренессин хăш йывăрлăхĕсемпе çыхăнмаллине, тăван чĕлхе ытти уроксемпе мĕнле шайлашмаллине малтанах палăртса хумалла.

Вуланине каласа пама, изложении çырма хăхни ачасене харпăр шухăшне, сăнланине çыхăнуллăн çырса палăртма хатĕрлет.

Ăслав çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмалла.

Сочинении темисене палăртнă чух ачасем класра мĕн вуланине. Курни-илтнине, вĕрентуçĕпе пĕрле укерчексем пăхнине шута илмелле. Тема сĕннĕ чух вĕренекенсен усĕмне, ăнланăвĕпе шухăш-ĕмĕтне шута илмесенвĕсем ĕçе ăнăçлă пурнăçлаймаççĕ: сочинении чухăн шухăшлă, тытăмĕпе кăнттам, чĕлхипе начар пулса тухать. Сочинени темине ачасен усăллă ĕçĕсемпе çыхăнтарсан аван.

Пуçламăш шкулти изложенисемпе сочиненисем ытларах калуллисем пулмалла. Изложенипе сочинении калăпăшĕ пуçламăш классенче пысăк пулмалла маар. Вĕсене турех тасан çыртармалла, икĕ хут çыртарса пĕр урокран ытла тăстармалла маар. Пĕчĕкрех ĕçсене вулав тата чĕлхе урокĕсенче ирттерме е класра лайăх хатĕрленсе киле пама та юрать.

Çырма вĕрентесси. Тĕрĕс те илемлĕ çырасси.

Пуçламăш классенче тăван чĕлхепе тĕрĕс те илемлĕ çырма вĕрентес ĕç нумай енлĕн пулса пырать. Тĕрĕс, таса, илемлĕ çырма вĕренччĕр тесен ачасен алă хăнăхăвĕпе куç вçине куллен лайăхлатма тăрăшмалла. Çырăва вĕрентнĕ май сасса сас паллипе палăртма, сас паллине, сăмаха, предложение çăмăллăн вулама-çырма, вĕсене кĕнекерен е класс хăми çинчен çырса илме, çырнине тĕрĕслеме, йăнăшсене турлетме хăнăхтармалла.

Таса та илемлĕ çырма вĕрентме программăра ятарлă уроксем палăртман. Ку ĕçе тăван чĕлхе урокĕсенче куллен туса пымалла. 1 класра çыру хăхтарăвĕсене «Çыру тетрачĕпе» усă курса йĕркелемелле.

Таса çырмалли хăнăхтарусене 2-4 классенче урокри грамматика тата орфографии материалĕпе çыхăнтарма тăрăшмалла. Пуçламăш шкулта вĕренекен ачан çырăвĕ тирпейлĕ, вулама меллĕ, тĕрĕс пулмалла. Таса та илемлĕ çрма вĕрентни тирпейлĕ пулма, кирек мĕнле ĕçĕ те турĕ кăмăлпа, тăрăшуллă тума хăнăхтарать.

## 1. ПРЕДМЕТĂН ШАЛАШĔ (СОДЕРЖАНИЙĔ)

### <u>1 КЛАСС</u>

### Вулама –çырма вĕрентес умĕнхи тапхăр

Хатĕрлев тапхăрĕ икĕ эрне тăсăлать. Ку тапхăра ытларах тăсни вулама-çырма вĕрентес вăхăта кĕскетни пулать пулин те, ачасем шкулта хутла вĕренме мĕн таран хатĕррине шута илсе учитель хатĕрлеве ытларах вăхăт уйăрма та пултарать. Ку тапхăрта малти вырăнта пĕлӳ илесси мар, хăнăхусем туянасси пулмалла.

### Вулама –çырма вĕрентмелли тапхăр

Ку тапхăр çав тери явaплă: ачасен вулас-çырас ăсталăх никĕсĕ хывăнать. Сак ĕç çĕнĕлĕхĕпе вĕсен вĕренӳри пулас çитĕнĕвĕсем тачă çыхăннă.

Эпир вулама-çырма вĕрентме усă курма сĕнекен меслете талккишлĕ анализ-синтез меслечĕ теме пулать. Вăл XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчех сарăлса çирĕпленнĕ сасă анализ-синтез меслечĕн варианчĕ.

Тапхăр сентябрь çурринчен пуçласа апрель вĕçĕ таран тăсăлать.

### Вулама –çырма вĕреннĕ хыççăнхи тапхăр

Ку тапхăр тăван чĕлхери пур тĕп сасăсемпе, вĕсен сас палийĕсемпе паллашнă хыççăн пуçланать те вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен тăсăлать. Тапхăрăн тĕп тĕллевĕ ку таранччен харпăрланă ăслай-хăнăхусене ăнланусене çирĕплетесси, пуплев ĕç- хĕлĕн пур енĕсене те малалла аталантарасси, çивĕчлетесси.

**Сасăсемпе сас паллисем.**

Вĕсем хушшинчи уйрăмлăхсем çинчен ачасем 1-2 классенчех пĕлеççĕ. Сасăсем уçă тата хупă, хытă тата çемçе, янăравлă тата янăравсăр пулнине палăртма вĕренеççĕ, сыпăк, пусăм ăнлавсемпе паллашаççĕ, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас пали тытăмне тишкереççĕ. Вулама-çырма вĕренмелли кашни урокрах ачасем пуплевĕн ансаттĕслĕхĕсене пăхса тухаççĕ, çавна май фонетика терминĕсемпе усă курма та хăнăхаççĕ.

Тĕпрен илсен, фонетикăпа графика тишкерĕвне вĕрентнин тĕллевĕсем: ачасем сасăсене ăнланса уйăрма, вĕсене тăван çырулăхра йышăннă пек палăртма вĕренмелле. 1 класс пĕтернĕ тĕле вĕсен çакна пĕлмелле: каланипе çырни хушшинче турĕ шайлашу çук, сăмахри сасăсемпе сас паллисен йышĕ пур чухне те пĕр пек маар, чылай сас паллин темиçе пĕлтерĕш пулать (сăмахран, хытă хупă сасса та, çемçине те пĕр пекех палăртатпăр: ут-ут, сăн-сĕн), хăш-пĕалли икĕ сасса палăртать(яка, юрă, ешчĕк), тепĕр чухне пĕр сассах икĕ сас пали çырса палăртатпăр (кукăль, мăкăнь, вулать).

**Сăмах.**

Пуçламăш шкулта вĕренекенсен сăмах йышне пуянлатассине тăватă çулĕпех тĕп тĕллевенсен пĕри те6се шутламалла. Ку тĕллеве пуплеве пур енлĕн аталантармалли уроксенче тĕрлĕ хăнăхтарцу тутарса пурнăçламалла. Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана, пулăма, вĕсен ĕçне т.ыт.те. палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май пурине ачасем чĕлхе теорине туррĕн вĕренсе маар, тĕрлĕ хăнăхтару, сăнавсем тунă май куç кĕрет курмалла. Вĕсем шухăша тĕрĕсрех палăртакан сăмахсене суйлама вĕренсе пыраççĕ, сăмах йышĕ пуянланса пырать, унпа усă курасси лайăхланать.

**Предложени.**

Кĕçĕн классенче вĕренекенсен: 10 предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă, е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура – кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен; 2) предложении членĕсем çичен; 3) предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çичен; 4) предложени сăмах майлашăвĕсенчен тăни çинчен пĕлмелле. 1 класра ачасем предложение пуплевре асăрхама, ăна сăмахран уйăрма, ăна çырма, пысăк сас паллинчен пуçлама, вĕçĕнче пăнчă лартма вĕренеççĕ.

**Çыхăнуллă пуплев.**

Кĕçĕн çулхи ачасем малашне мĕнле вĕренсе пырасси, ăс-тăн илесси пуплевпе шухăшлав аталанăвĕсенчен килет. Çавна кура çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе çыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна çрасси те кашни класрах тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Кĕçĕн классенче вĕренекенсен çхăнуллă пуплевне аталантарасси, пĕтĕмĕшле илсен, çыхăнуллă текст тума вĕрентессипе пĕр килет. Вуланă е итленĕ калав, выляса кăтартнă диалог- ачасемшĕн çавăн евĕр текст тумалли тĕслĕхсем.

Çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсене вулав урокĕсенче те, чĕлхе урокĕсенче те ирттермелле, вĕсене сăмах вĕççĕн каласа та, çырса та пурнăçламалла. Чĕлхе урокĕсенче, тĕпрен илсен, изложенисемпе сочиненисем, вулав урокĕсенче вара сăмах вĕççĕн тумалли ĕçсем ытларах сĕнмелле.

Ачасене текст ăнлавпа паллаштармалла, текстăн тытăмне сăнаттармалла, ансат текстсем тума вĕрентмелле. Çак ĕçре тĕрлĕ мелпе, курăм хатĕрĕсемпе анлăн усă курмалла.

**Ăславлă (творчествăллă) çыру урокĕсем**.

Программăри тăван чĕлхе курсĕнче ятарласа ăславлă çыру урокĕсем палăртнă.

Калăпăшĕ пуçламăш классенче пысăк пулмалла мар. Вĕсене тӳрех тасан çыртармалла, икĕ хут çыртарса пĕр урокран ытла тăстармалла мар.

**Çырма вĕрентесси. Тĕрĕс те илемлĕ çырасси.**

Пуҫламăш классенче тăван чĕлхепе тĕрĕс те илемлĕ ҫырма вĕрентес ĕҫ нумай енлĕн пулса пырать. Тĕрĕс, таса, илемлĕ ҫырма вĕренччĕр тесен ачасен алă хăнăхăвĕпе куҫ вҫине куллен лайăхлатма тăрăшмалла. Ҫырăва вĕрентнĕ май сасса сас паллипе палăртма, сас паллине, сăмаха, предложение ҫăмăллăн вулама-ҫырма, вĕсене кĕнекерен е класс хăми ҫинчен ҫырса илме, ҫырнине тĕрĕслеме, йăнăшсене турлетме хăнăхтармалла.

Таса та илемлĕ ҫырма вĕрентме программăра ятарлă уроксем палăртман. Ку ĕҫе тăван чĕлхе урокĕсенче куллен туса пымалла. 1 класра ҫыру хăнăтарăвĕсене «Ҫыру тетрачĕпе» усă курса йĕркелемелле.

Пуҫламăш шкулта вĕренекен ачан ҫырăвĕ тирпейлĕ, вулама меллĕ, тĕрĕс пулмалла. Таса та илемлĕ ҫырма вĕрентни тирпейлĕ пулма, кирек мĕнле ĕҫе те турĕ кăмăлпа, тăрăшуллă тума хăнăхтарать.

**Вулама –ҫырма вĕрентес умĕнхи тапхăр(18 сехет)** Шкула. Пуплев . Ача-пăча вăййисем. Теттесем. Хутшăну . Урокра . Калу тата ҫыру. Шкул ачин кун йĕрки. Тăван кил-йыш. Ҫыхăнуллă пуплев . Сармантей. Тăван ен. Кĕрхи садра. Предложени. Улма-ҫырла. Пахча. Пахча ҫимĕҫ. Сăмах .
«Ҫарăк» юмах. Сыпăк .Ҫарăк» юмах . Пусăм. Таврари сасăсем. Килти выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк. Пуплеври сасăсем. Тăван тавралăх. Вăрман. Тискер кайăксем Уҫă сасă. Тăван тавралăх. Вăрманти йывăҫсем. Хупă сасă. Ялти ĕҫсем. Тырă вырни. Утарта. Текст. Предложени. Сăмах. Уҫă тата хупă сасăсем . Ялти ĕҫсем. Утарта. Текст. Предложени. Сăмах. Уҫă тата хупă сасăсем .
**Вулама –ҫырма вĕрентмелли тапхăр(71 сехет)** [а] сасă. А, а сас паллисем. [а] сасă. А, а сас паллисем . [у] сасă. У, у сас паллисем .. [а], [у] сасăсем. А, а, У, у сас паллисем . [ă] сасă. Ă, ă сас паллисем .[ă] сасă. Ă, ă сас паллисем .. [н] сасă. Н, н сас паллисем. «Анна, ан!» текст . [л] сасă. Л, л сас паллисем. «Ула уланă» текст . [м] сасă. М, м сас паллисем. «Ула аманнă» текст. [т] сасă. Т, т сас паллисем. «Антун, ут утлан!», «Анна, тумлан!» текстсем. [т] сасă. Т, т сас паллисем. «Анна, тумлан!» текст . [п] сасă. П, п сас паллисем. [п] сасă. П, п сас паллисем. «Антун пулла аннă» . [ш] сасă. Ш, ш сас паллисем. «Шăлан татнă» текст . [ш] сасă. Ш, ш сас паллисем. «Антун ташланă» текст .[р] сасă. Р, р сас паллисем. «Урамра ăшă» текст.[р] сасă. Р, р сас паллисем. «Антун арман тунă» текст .[ы] сасă. Ы, ы сас паллисем. «Утарта», «Ыраш» текст.[ы] сасă. Ы, ы сас паллисем. «Ыраш» текст.[в] сасă. В, в сас паллисем. «Ан шавла!» текст .[в] сасă. В, в сас паллисем. «Шывра» текст .[х] сасă. Х, х сас паллисем. «Улăхра» текст . [х] сасă. Х, х сас паллисем. «Вăрманта» текст .[и] сасă. И, и сас паллисем. Хытă (ҫемҫе) сасăсем, сыпăксем, сăмахсем.Пан улми текст.[и] сасă. И, и сас паллисем. Хытă (ҫемҫе) сасăсем, сыпăксем, сăмахсем. Хутăш сăмах. «Маттур, Тимуш!» текст . [э] сасă. е сас палли. «Парне» текст .
[э] сасă. Э, э сас паллисем. «Тавах, аппа!» текст.[ĕ] сасă. Ĕ, ĕ сас паллисем. «Пулăра» текст .
ĕ] сасă. Ĕ, ĕ сас паллисем. «Ĕшнере» текст .[с] сасă. С, с сас паллисем. «Сухара» текст .[с] сасă. С, с сас паллисем. «Туссем» текст .[к] [к´] сасăсем. [к] [к´] сас паллисем. «Автан» текст .
[к] [к´] сасăсем. [к] [к´] сас паллисем..[ÿ] сасă; Ÿ, ÿ сас паллисем. «Кÿлĕ» текст .[ÿ] сасă; Ÿ, ÿ сас паллисем. «Ÿссен эсĕ кам пуласшăн?» текст .[ҫ´] сасă; Ҫ, ҫ сас паллисем. «Аслати», «Ҫуллахи ҫумăр» текстсем .[ҫ´] сасă; Ҫ, ҫ сас паллисем. «Ваттисемпе мăнукĕсем» текст.
[ч´] сасă. Ч, ч сас паллисем. «Чакакпа чĕппи» текст.[ч´] сасă. Ч, ч сас паллисем. «Чăлха ҫыхни» текст.Ҫемҫелĕх палли (ь). «Тулă пуссинче», «Чи тутли» текстсем.Ҫемҫелĕх палли (ь). «Чи тутли» текст.[й] сасă. Й, й сас паллисем. «Упа ҫури» текст . [й] сасă. Й, й сас паллисем. «Ула такка, «Йăмра» сăвăсем . [йу] сыпăк. Ю, ю сас паллисем. «Икĕ юлташ» текст , ҫырса илни.
[йу]сыпăк. Ю сас паллин иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ. «Юр кĕлетке» текст .[йу]сыпăк. Ю сас паллин иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ. «Юман» текст.[йа] сыпăк. Я, я сас паллисем. «Пирĕн ял» текст .
Я сас паллин иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ. М. Ваҫлейĕн «Йĕлтĕрпе» сăвви, Ю. Силэмĕн « Кăвак сурăх» калавĕ.Я сас паллин иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ. Ю. Силэмĕн « Кăвак сурăх» калавĕ.Е, е сас паллисем [йэ] сыпăка пĕлтерни. «Пĕчĕк пахчаҫă», текст.Е, е сас паллисем [йэ] сыпăка пĕлтерни. «Маринепе Энтип» текст.Е, е сас паллисем. А. Ĕҫхĕлĕн «Анне» сăвви.[о] сасă. О, о сас паллисем. «Чĕр чун кĕтесĕ» тект. О, о сас паллисем. А. Ҫулĕҫĕн «Конькипе» сăвви.(о) сасă, ё сас палли. «Мĕнле сăмах ҫырнă» текст .Вулав хăнăхăвĕсене ҫирĕплетесси. «Кун ячĕсем» текст .[б], [б’] сасăсем. Б, б сас паллисем. «Библиотекăра» текст .[б], [б’] сасăсем. Б, б сас паллисем. «Театра каятпăр» текст .[г]

[г’] сасăсем. Г, г сас паллисем. «Пĕрремеш космонавт» текст .[г] [г’] сасăсем. Г, г сас паллисем. «Пытанмалла выляни» текст .[д] [д’] сасăсем. Д, д сас паллисем. Р. Сарпин «Дельфин» сăвви .[д] [д’] сасăсем. Д, д сас паллисем. Е. Пермякăн «Алă мĕн тума кирлĕ".з] сасă. З, з сас паллисем. «Шкул пахчинче» текст .[з] [з’] сасăсем. З, з сас паллисем. Л. Толстойăн «Арăсланпа йытă çури» калавĕ .[ф] [ф’] сасăсем. Ф, ф сас паллисем. «Фермăра» текст .[ф] [ф’] сасăсем. Ф, ф сас паллисем. «Светофор» текст .[ж] сасă. Ж, ж саспаллисем. «Хисеплĕ çынсем» текст .[ц] сасă. Ц, ц сас паллисем. «Циркра» текст.
[щ] сасă. Щ, щ сас паллисем. В. Маяковскин «Лайăх тени мĕн тени…» сăвви .
Уйăракан хытăлăх (ъ) тата çемçелĕх (ь) паллисем. В. Харитоновăн «Çил ачи» сăвви.
**Вулама –çырма вĕреннĕ хыççăнхи тапхăр. (43 сехет)**Хамăрах вулатпăр, çыратпăр. Ю. Петровăн «Кĕнеке» сăвви, çырса илни.Çулталăк хушши. К. Ивановăн «Ку хăçан пулать-ши?» сăвви .
Çитрĕ ырă çуркунне. К. Ивановăн «Çуркунне» сăвви .Вăхăт. Талăк. И. Ивникăн «Тул çутăлать» сăвви .Вăхăт. Кун вĕçленет, каç пулать. Н. Шупуççыннин «Каç пулать» сăвви .Тăван Çĕршыв. К. Ушинскин «Тăван çĕршыв» калавĕ .Чăваш Республики. Юхма Мишшин «Тăван çĕршыв» калавĕ.Тăван кĕтес. П. Егоровăн «Тăван ялăм» калавĕ.Пирĕн ял çыннисем. Н. Карайăн «Мучи пĕви» калавĕ.Тăван çĕршыв чĕнет. В. Сухомлинскин «Карăшпа каюра» юмахĕ .И. Я. Яковлев - чăваш халăхне çутта кăларакан .И. Я. Яковлевăн букварĕнчен. «Чакак», калав .И. Я. Яковлевăн букварĕнчен». «Çуркунне» калав .Чăваш халăх чаплă сăвăçи. «Чăваш халăх сăвăçи» текст .
К. Ивановăн «Сентти», «Чĕкеç» сăввисем .Чăваш халăхĕн чаплă ывăлĕ. Юхма Мишшин «Виççĕмĕш космонавт-летчик» калавĕ .Аслă Çĕнтерӳ кунĕ. «Çĕнтерӳ кунĕ» текст .Аслă Çĕнтерӳ кунĕ. «Чап монуменчĕ» текст.Аслă вăрçă паттăрĕсем. «Пĕртăван паттăрсем» текст Аслисемпе вĕттисем. Г. Мальцевăн «Тав туни» калавĕ .Аслисемпе вĕттисем. В. Ильинăн «Пӳлĕмре» сăвви.Аслисемпе вĕттисем. В. Сухомлинскин «Пĕрремĕш пан улми» калавĕ. П.Çăлкуçăн «Хама çеç, тен, хăналас» сăвви.Аслисемпе вĕттисем. Е. Пермякăн «Хăйсемех» калавĕ, К. Ивановăн «Натали кĕпе тĕрлет» сăвви .Аслисемпе вĕттисем. Н. Ытарайăн «Кулине» сăвви.Ю. Силэмĕн «Килнĕ чухне илĕпĕр» .Аслисемпе вĕттисем. П. Эйзинăн «Сăпка юрри», «Сехет» сăввисем .Чĕр чунсем – пирĕн туссем. П. Яккусен «Кумалякпа туслашни» калавĕ .Чĕр чунсем – пирĕн туссем. А. Ыхран «Ырпи» сăвви.Чĕр чунсем – пирĕн туссем. К. Сергиенкăн «Килсĕрскерсем» калавĕ .Чĕр чунсем – пирĕн туссем. М.Сакмаровăн «Улине тĕлĕнет» калавĕ .
Хаваслă çу çитрĕ. В. Эктелĕн «Сывлăм шывĕ» сăвви, Çемен Элкерĕн «Уçланкăра» калавĕ . Хаваслă çу çитрĕ. В. Ямашăн «Ăшă çумăр» .Чĕр чунсем – пирĕн туссем. В. Сухомлинскин «Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕннĕ» калав .Чĕр чунсем – пирĕн туссем. Х. Уярăн «Пурăш» калав, çырса илни.Чĕр чунсем – пирĕн туссем. Асхат Ахметкужинăн «Улашка», Н. Шелепин «Упа» сăввисем.Юмах ятăм юптартăм… Х. Андерсăнăн «Асамлă тӳпем» юмахĕ.Чĕр чунсем – пирĕн туссем. Г. Лучăн «Ай, пакша!» калавĕ .Халăх сăмахлăхĕнчен. Чăваш халăх юрри-сăвви .
Чăваш халăх юмах-халапĕ. «Çĕвĕç» юмах.«Икĕ шапа» испан халăх юмахĕ.«Сывă пул, пĕрремĕш кĕнекемĕр!» Урок-уяв.Урок-вăйă «Вулатпăр та çыратпăр» .Пĕтĕмлетӳ уроке.

**2 КЛАСС**

1 класра мĕн вĕреннине шута илсе: вулав урокĕсемпе тачă çыхăнтарса ачасен çыхăнуллă калаçас, тăнласа тăнкарас, вулас тата çырас мехелĕсене малалла аталантармалла. Вуламалли, тăнламалли, çыхăнуллă каласа памалли, калаçăва хутшăнмалли, çырмалли хăнăхтарусем çине таянса вĕсемпе çыхăнуллăн чĕлхе тытăмĕн тĕрлĕ сийĕпе (фонетика,лексика, морфологи, синтаксис, стилистика) усă курма пĕлнине лайăхлатмалли хăнăхтарусем куллен йĕркелемелле. Вулаттарнă, пуплеве тăнлаттарнă, çыхăнуллă пуплев тутарнă, çыртарнă май вĕренекенсене чĕлхен тĕрлĕ енĕсене ансат тишкерме, чĕлхепе ăслăлăхĕн кирлĕрех терминĕсемпе, янтă пĕлĕвĕсемпе усă курма вĕрентесси.

***Çыхăнуллă пуплев.*** Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ. Текст. Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Пысăках мар текста, унăн пĕчĕк пайĕсене ят парасси.
- ӳкерчĕксемпе ĕçлесси. ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси, вĕсене çырасси.
- Изложени çинчен ăнлантарасси. Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентуçĕ пулăшнипе 30-45 сăмахлă текст тăрăх изложени çырасси.
-Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе 4-5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.
***Пуплев этикечĕ.*** Сывлах сунни. Сывлах суннă чух усă куракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Палашу сăмахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сывпуллашу сăмахĕсем.
***Ĕç хучĕсем.*** Ансат пĕлтерӳ хайласси. Юлташ патне çыру çырасси.
**Сăмах йышне пуянлатасси, унпа усă курма пĕлнине çирĕплетесси**
- тăван-хурăнташа чĕнесси;
- тумтир, атă-пушмакпа çыхăннă сăмахсем;
- кил-çурт таврашĕпе çыхăннă сăмахсем;
- кил-çуртри япала ячĕсем;
- килти кайăк-кĕшĕк ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсем;
- кайăк-кĕшĕк ячĕсем;
-пулăсемпе шыври чĕр чунсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайĕсем;
-апат-çимĕс ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайĕсем;
- улма-çырла, пахча çимĕç ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă ытти пуплев пайĕсем;
-йывăç ячĕсем;
-тĕрлĕ усен-тăран ячĕсем;
-кăмпа ячĕсем.

### Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси

***Алфавит.*** Сапаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.
Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăхтарасси.
***Япалана пĕлтерекен сăмахсем***. Вĕсене *кам?* тата *мĕн*? ыйтусем тăрăх тупасси.
***Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем***. Вĕсене *мĕн тăвать? мĕн турĕ?* ыйтусем тăрăх тупасси.
***Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем***, вĕсене *мĕнле?* ыйту тăрăх тупасси.
***Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси.*** Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ тата çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем
***Лексикăпа тематика ушкăнĕсем:*** тĕс ячĕсем, çынна хаклакан сăмахсем.
***Предложени.*** Пуплеве предложенисене уйăрасси.предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем.
***Пунктуаци.*** Предложени вĕçне пăнчă, ыйту тата кăшкăру паллисем лартасси.
***Орфографи***. 1) хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [ л ’], [ н’ ], [ т’ ] сасăене *л, н, т* саспаллисем хыççăн *ь* çырса палăртасси
2) Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси.
3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек саспаллипе палăртасси
4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.
5) Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси.
6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси.

## Таса та илемлĕ çырасси

Çыру гигиени хăнăхăвĕсене çирĕплетесси.
Пĕчĕк саспаллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа çырасси: 1) и, ш, г, п, т, й, н, р, у, .; 2) л, м, ц, щ, ь, ы; 3) а, ă, ю, ф, д, б, я; 4) с, ç, е, ĕ, ă,ч,, в; 5) э, х, ж, к.
Пысăк саспаллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа çырасси: 1) Й, И ,Ш, Ц, Щ, Ч, Ы, Л, М, А, Ă; 2) О, С, Ç, Х, Е ,Ĕ ,Ë ,З, Э, Я; 3) Ж, У, ,, Н, К, Ю, Р, В ,Ф; 4) Г, П, Т, Б, Д.
***Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем:*** *алсиш, анне, аппа, асатте, атте, ăмăрт кайăк, библиотека, больница, выльăх, вырсарни кун, герой, дежурнăй, ешчĕк, ёлка, журнал, йăмăк, кĕçнерни кун, кĕркунне, кĕсье, класс, класра, колхоз, коньки, комбайн, комбайнер, кукамай, кукаçи, кукка, лётчик, майка, мунча, пан улми, пичче, ракета, самолёт, çулла, çуркунне, тăвайкки, тетрадь, трактор, тунти кун, тырпул, улмуççи, учитель, учительница, хĕн, ялав, физкультура, хĕлле, чăх-чĕп, шăллăм, шăмат кун, щётка, ытлари кун, эрне кун, юлан ут, юн кун.*
**1-мĕш класра вĕреннине аса илни (5 сехет)** *Хăрушсăрлăх правилисене аса илесси. Предложени, сăмах, сасă, сас палли.*Предложени, сăмах, сасă, сас палли.Предложени, сăмах, сасă, сас палли. Ӳкерчĕк тăрăх калав çырасси.Предложени, сăмах, сасă, сас палли.Çырса илни «Ун юлташĕ - сунчăк»

**Сасă тата сас палли. Алфавит. (28 сехет)** Сасă тата сас паллисем.Алфавит.Уçă сасăсемпе хупă сасăсем.Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. Диктант «Хыр» Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем.Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем. Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем.Сывлăх сунасси. Сывпуллашасси.Творчество ĕçĕ. Сывлăх сунмалли, сывпуллашмалли сăмахсене усă курса диалог çырасси.Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçеллĕх палли (ь) çырасси. Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçеллĕх палли (ь) çырасси. Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçеллĕх палли (ь) çырасси. Диктант «Çил мĕнле пулать»Уйăракан çемçеллĕх палли (ь) çырасси. Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни.Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни.Тăванлăх-хурăнташлăх сăмахĕсем..Тăванлăх-хурăнташлăх сăмахĕсем. Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене çырасси.Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене çырасси.Орфографи словарĕ.Сăмах сыпăкĕ.Сăмах сыпăкĕ. Çырса илни « Куракпа чана». Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. Диктант «Асанне патĕнче»

**Сăмах. Япала ячĕ.(19 сехет).** Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. Сочинени «Хĕл çитрĕ». Пĕр япалана пĕлтерекен сăмахсем. Пĕр япалана пĕлтерекен сăмахсем. Япала нумаййине пĕлтерекен сăмахсем. Япала нумаййине пĕлтерекен сăмахсем. Çын ячĕсене, хушамачĕсене, ашшĕ ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Çын ячĕсене, хушамачĕсене, ашшĕ ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Паллашу сăмахĕсем. Диктант "Хураçка». Выльăх-чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Изложени «Чанапа кăкшăм». Выльăх-чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. Пĕлтерӳ çырасси.
**Глагол (19 сехет)** Мĕн тăватъ? мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсем. Мĕн тăватъ? мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсене çырасси. Мĕн тăватъ? мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсене çырасси.. Ӳкерчĕксем тăрăх план туса калав çырасси. Мĕн тăватъ? мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсене çырасси.Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем. Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем. Пăхса çырни «Çывăх тус». Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем. Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем.Диктант

«Çăлтăрсем чĕнеççĕ». Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем ( антонимсем). Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем ( антонимсем). Çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем (синонимсем). Пăхса çырни «Надежда Павлова». Хирĕçле тата пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕлсем. Хирĕçле тата пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ ĕç-хĕлсем. Тав тăвасси. Диктант «Юман».

**Паллă ячĕ.(10 сехет)** Япала паллине пĕлтерекен самахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. Япала паллине пĕлтерекен самахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. Изложени "Йытăпа унăн мĕлки". Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. Çынна сăнлакан сăмахсем. Çыру çырасси. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем). Пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (синонимсем).

| 92 | Паллă ячĕ япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни | 1 |
| 93 | Çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (синонимсем) | 1 |
| 94 | Çулĕпе аслăрах çынсене хисеплесе чĕнесси | 1 |
| 95 | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем) | 1 |
| 96 | Изложени №8 «Çĕмĕрт» | 1 |
| | **Виççĕмĕш класра вĕреннипе аса илсе çирĕплетесси.** | **6** |
| 97 | Сасăсемпе сас паллисем | 1 |
| 98 | Предложени. | 1 |
| 99 | Сăмах тытăмĕ | 1 |
| 100 | Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев диктанчĕ №8 «Шуршăл ялĕ». | 1 |
| 101 | Пуплев пайĕсем | 1 |
| 102 | Сочинени «3-мĕш класри чи килĕшнĕ урок» | 1 |

## 4 класс (102 сехет)

| **№** | **Пай тата урок темисем** | **Сехетсен шучĕ** |
|---|---|---|

| | | |
|---|---|---|
| | **Вĕреннине аса илесси** | **9** |
| 1 | Хăрушсăрлăх правилисене аса илесси. Савнă çĕр, чăваш çĕр-шывĕ | 1 |
| 2 | Сăмах. Предложени. Текст. | 1 |
| 3 | Сăмах. Предложени. Текст. | 1 |
| 4 | Сăмах. Предложени. Текст. | 1 |
| 5 | Сочинени «Çуллахи вăхăтра аслисене пулăшни» | 1 |
| 6 | Çырса илни. «Кăвакарчăн» | 1 |
| 7 | Сасăсем тата сас паллисем. Сыпăк, пусăм. | 1 |
| 8 | Сасăсем тата сас паллисем. Сыпăк, пусăм. | 1 |
| 9 | Хутшăну йăли-йĕрки. Этикет. | 1 |
| | **Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ** | **12** |
| 10 | Пĕр тымарлă сăмахсем | 1 |
| 11 | Сăпайлăх сăмахĕсем | 1 |
| 12 | Изложени «Сахăр» | 1 |
| 13 | Сăмах аффикс хушăннипе пулни | 1 |
| 14 | Сăмах аффикс хушăннипе пулни | 1 |
| 15 | Мăшăр сăмахсем | 1 |
| 16 | Мăшăр сăмахсем | 1 |
| 17 | Сăмахсене икĕ хут калани | 1 |
| 18 | Сочинени. «Кĕрхи вăрманта» | 1 |
| 19 | Сăмахсене икĕ хут калани | 1 |
| 20 | Сăмахсене икĕ хут калани | 1 |
| 21 | Тĕрĕслев диктанчĕ. «Хăяр татса пулăшни» | 1 |
| | **Текст** | **7** |
| 22 | Текстри предложенисен килĕшĕвĕ | 1 |
| 23 | Текст теми | 1 |
| 24 | Изложени. «Пăчи» | 1 |
| 25 | Текстăн тĕп шухăшĕ | 1 |
| 26 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. «Мулкачсем». | 1 |
| 27 | Текстăн тĕп шухăшĕ | 1 |
| 28 | Текст тытăмĕ | 1 |
| | **Предложенин пĕр йышши членĕсем** | **5** |
| 29 | Пĕр йышши членсем çинчен ăнлантарни | 1 |
| 30 | Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союзсем | 1 |
| 31 | Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союзсем | 1 |
| 32 | Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союзсем | 1 |
| 33 | Изложени. «Будка тăрринчи йăва» | 1 |
| | **Пуплев пайĕсем** | **2** |
| 34 | Сăмахсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлани | 1 |
| 35 | Пуплев пахалахĕ | 1 |
| | **Япала ячĕ** | **13** |
| 36 | Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Падежсем | 1 |
| 37 | Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Падежсем | 1 |
| 38 | Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ | 1 |
| 39 | Диктант «Шăллăм» | 1 |
| 40 | Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ | 1 |
| 41 | Ăславлă çыру (Сочинени) «Пирĕн кил-йыш» | 1 |
| 42 | Уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ | 1 |
| 43 | Уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ | 1 |
| 44 | Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçлени | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 45 | Япала ячĕсем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни | 1 |
| 46 | Ӳкерчĕк тăрăх калав туса çырасси. | 1 |
| 47 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант «Юман». | 1 |
| 48 | Саламламалли правилăсем. | 1 |
| | **Паллă ячĕ** | **8** |
| 49 | Паллă ячĕсене пĕлтерĕшĕ, пулăвĕ | 1 |
| 50 | Паллă ячĕсене пĕлтерĕшĕ, пулăвĕ | 1 |
| 51 | Паллă ячĕсене пĕлтерĕшĕ, пулăвĕ | 1 |
| 52 | Паллă ячĕсен тĕп тата танлаштаруллă степенĕсем | 1 |
| 53 | Ăславлă çыру. Сочинени «Хĕлле». | 1 |
| 54 | Паллă ячĕсен вăйлă степенĕ | 1 |
| 55 | Диктант «Кампур» | 1 |
| 56 | Паллă ячĕсем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни | 1 |
| | **Хисеп ячĕ** | **5** |
| 57 | Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕ | 1 |
| 58 | Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕ | 1 |
| 59 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. «Çăка» | 1 |
| 60 | Ĕç хучĕсем, пĕлтерӳ, заметка çырасси | 1 |
| 61 | Ĕç хучĕсем, пĕлтерӳ, заметка çырасси | 1 |
| | **Местоимени** | **4** |
| 62 | Местоимени пĕлтерĕшĕ. Сăпат местоименийĕсем | 1 |
| 63 | Местоимени пĕлтерĕшĕ. Сăпат местоименийĕсем | 1 |
| 64 | Ӳкерчĕк тăрăх калав туса çырасси. | 1 |
| 65 | Уяв ячĕпе саламласси | 1 |
| | **Глагол** | **23** |
| 66 | Глагол пĕлтерĕшĕ. Глаголăн пурлă тата çуклă формисем. | 1 |
| 67 | Глагол пĕлтерĕшĕ. Глаголăн пурлă тата çуклă формисем. | 1 |
| 68 | Изложени. «Вăрмана кам лартать» | 1 |
| 69 | Глагол вăхăт тăрăх улшăнни | 1 |
| 70 | Глагол сăпат тăрăх улшăнни | 1 |
| 71 | Глагол хисеп тăрăх улшăнни | 1 |
| 72 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Изложени. «Карап ăсти» | 1 |
| 73 | Хальхи вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 74 | Хальхи вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 75 | Хальхи вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 76 | Хальхи вăхăтри глаголсене çырасси | 1 |
| 77 | Хальхи вăхăтри глаголсене çырасси | 1 |
| 78 | Хальхи вăхăтри глаголсене çырасси | 1 |
| 79 | Диктант «Каçхи вăрманта» | 1 |
| 80 | Сочинени. «Иванов бульварĕ» | 1 |
| 81 | Иртнĕ вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 82 | Иртнĕ вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 83 | Иртнĕ вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 84 | Ӳкерчĕк тăрăх сочинени çырасси. | 1 |
| 85 | Пулас  вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 86 | Пулас  вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 1 |
| 87 | Глагол çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни | 1 |
| 88 | Глагол çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни | 1 |
| | **Вĕренӳ çулĕнче ăса хывнине аса илесси** | **12** |

| | | |
|---|---|---|
| 89 | Ӳкерчĕк тăрăх сочинени çырасси | 1 |
| 90 | Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ. Текст. | 1 |
| 91 | Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ. Текст. | 1 |
| 92 | Изложени. «Сывлăшри тытăçу» | 1 |
| 93 | Предложени. Пуплев пайĕсем. Текст. | 1 |
| 94 | Ӳкерчĕк тăрăх сочинени çырасси | 1 |
| 95 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. | 1 |
| 96 | Ӳкерчĕк тăрăх сочинени çырасси | 1 |
| 97 | Изложени. «Пăшипе пăрушĕ» | 1 |
| 98 | Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев диктанчĕ «Хĕвел». | 1 |
| 99 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Изложени. «Хĕвеллĕ çумăр» | 1 |
| 100 | Пĕтĕмлетӳ урокĕ | 1 |
| 101 | Пĕтĕмлетӳ урокĕ | 1 |
| 102 | Пĕтĕмлетӳ урокĕ | 1 |

Приложение к рабочей программе по
чувашскому языку
ООП НОО МБОУ «Новомуратская СОШ»

## Чăваш чĕлхипе ирттермелли тĕрĕслев ĕçĕсем

**1 класс**

Сырса илни №1

Упа, юпа, юрă, кай, каю, хăю, ултав, юлташ, юрлать.

Сырса илни №2

Сивĕ хĕл иртрĕ. Шыв-шурлă çур çитрĕ. Часах ăшă çу кунĕсем пуçланĕç. Су хыççăн тулăх кĕр килсе çитĕ.

Сырса илни №3

Пурăш – çĕрлехи кайăк. Вăл йăвинчен кăнтăрла пит тухса çӳремест. Пурнăçне ытларах çĕр шăтăкĕнче ирттерет.

## 2 класс

| Урок йĕрки | 2-мĕш класра чăваш чĕлхипе ирттермелли тĕрĕслев ĕçĕсем. (Контрольно- измерительные материалы по чувашскому языку во 2 классе) | Усă курмалли методика хатĕрĕ. (УМК) |
|---|---|---|
| 5. | Тĕрĕслев ĕçĕ №1. Çырса илни «Ун юлташĕ -сунчăк» Илемпи çумăртан хăрамасть. Унăн юлташ пур. Вăл сунчăк ятлă. Çумăр çума пуçлать. Илемпи сунчăкне алла илет. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: |

| | | |
|---|---|---|
| | | Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 10с. |
| | Сасă тата сас палли | |
| 10. | Тĕрĕслев ĕçĕ №2. Диктант «Хыр»<br>Хыр – лайăх вутă. Унăн сухăрĕ паха чĕртавар. Вăл тикĕт, сăмала тума каять.Хыр лăссинче витамин нумай. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 10с. |
| 19. | Тĕрĕслев ĕçĕ №3Диктант «Çил мĕнле пулать»<br>Çил сывлăш куçнипе пулать. Ăшă сывлăш çўлелле хăпарать. Ун вырăнне сивĕ сывлăш пырса йышăнать. Çапла пуçланать çил. Çулталăкĕпех çил вĕрекен вырăнсенче çил арманĕсем те лартаççĕ. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. –15с. |
| 30. | Тĕрĕслев ĕçĕ №4 Çырса илни «Куракпа чана»<br>Куракпа чанана пĕр-пĕринчен уйăрса илме йывăрах мар. Чана куракран икĕ хут пĕчĕкрех. Хăй хура тĕслĕ. Мăйĕ тавралла кăштах сăрă тĕксем пур. Тутăр çыхса янă тейĕн. Куракăн вара пĕтĕм кĕлетки хупххура тĕслĕ. Çуначĕсем те, мăйĕпе пуçĕ те хура. | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-49с. |
| | Сăмах. Япала ячĕ. | |
| 46. | Тĕрĕслев ĕçĕ №5. Диктант "Хураçка»<br>Пирĕн Хураçка ятлă йытă пурччĕ. Эпĕ ăна хĕлле пĕчĕкçĕ çунана кўлтĕм. Хам çуна çине лартăм. Хураçка кĕлет айне кĕрех кайрĕ. Эпĕ пуçпа пĕренене çапăнтăм. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 24с. |
| | Глагол | |
| 60. | Тĕрĕслев ĕçĕ №6. Пăхса çырни «Çывăх тус»<br>Йытă çыншăн чи çывăх чĕр чун. Çурçĕрте йытта кўлсе çўреççĕ. Вăл сунарçăсене пулăшать. Çршыв чиккине сыхлать. Кил-çурт таврашне хураллать. Çын йытăпа тахçанах туслашнă. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 31с. |
| 63. | Тĕрĕслев ĕçĕ №7. Диктант «Çăлтăрсем чĕнеççĕ»<br>Паян Андриянăн техникумра юлашки экзамен.<br>Ĕкĕтет ăна. Çакăн çинчен ĕмĕтленет Андриян. Ĕмĕтĕн çуначĕсем асамлă.<br>Тўпе тăрă. Çăлтăрсем çиçеççĕ. Хăйсен илемне кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсем патне чĕнеççĕ. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 31с. |
| 67. | Тĕрĕслев ĕçĕ №8. Пăхса çырни «Надежда Павлова».<br>Надя ача чухнех балерина пулма ĕмĕтленнĕ. Вăл ташлама питĕ юратнă. | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, |

| | | |
|---|---|---|
| | Шкулта ташă кружокне çырăннă. Вĕренӳ çулĕ вĕçĕче шкула Пермьри хореографи училищинчен хăнасем килнĕ. Вĕсем тӳрех Надьăра пысăк талант асăрхаççĕ. Виççĕмĕш класс пĕтернĕ хыççăн вăл ашшĕпе Пермь хулине кайнă. Надя экзаменсене питĕ аван тытнă. Ăна вĕренме илнĕ.<br>Çулсем иртнĕ. Надя училищĕрен вĕренсе тухнă. Вăл 15 çултах тĕнчипе паллă балерина пулса тăнă. | О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-43с. |
| 71. | Тĕрĕслев ĕçĕ №9. Диктант «Юман»<br>Авал пирĕн тăрăхра юман йышлă ӳснĕ. Юманлăх тенĕ çав вырăнсене. Юманран авалах тĕрлĕ япала тунă. Юман хăми карап тума кайнă. Чăваш юманне те карап тума нумай турттарнă. Хăш-пĕр юман пин çул таран пурăнать. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 31с. |
| | Предложени | |
| 90. | Тĕрĕслев ĕçĕ №10. Диктант «Йытă çури»<br>Альма пĕчĕк ачасене питĕ кăмăллать. Кунĕпех выляма хатĕр вăл вĕсемпе. Кайри ури çине тăрса тăрăх сикет. Малти урине алă панă пек пама пĕлет. Ачасемшĕн хаклă чĕр чун хура сăмса. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 36с. |
| 93. | Тĕрĕслев ĕçĕ №11. Çырса илни «Тăвайккинче».<br>Ачасем урамра юр тӑвайкки купаларĕç. Кайран шыв сапрĕç те апат çиме килĕсене саланчĕç. Костя ачасемпе пĕрле ĕçлемерĕ. Чӳречерен вĕсем ĕçленине вӑрттӑн пӑхса ларчĕ. Тӑвайкки патĕнче никам та юлмарĕ. Костя тӑркӑч тӑхӑнчĕ те тӑвайкки патне тухрĕ. Шыв сапнӑ юр шӑнма ĕлкĕрнĕ. Костя ниепле те тӑвайкки тӑррине хӑпараймарĕ. Вара вӑл тӑвайккине хӑйӑр сапса тухрĕ. Халĕ çӑмӑллӑнах хӑпарчĕ. Ярӑнса анма пуçларĕ те … Аяла çитичченех чикеленсе кайрĕ. Сӑмсине катрĕ. Тӑркӑч хӑйӑр тӑрӑх шумасть иккен. | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-45с. |
| | 2-мĕш класра вĕреннине пĕтĕмлетесси | |
| 100. | Тĕрĕслев ĕçĕ №12. Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев диктанчĕ «Коля»<br>Коля – тирпейлĕ ача. Вăл шкулта та лайăх вĕренет. Унăн кĕсьинче шурă сăмса тутăрĕ. Коля кĕсьене ытлашши япала чикмест. Çавăнпа унăн кĕсьи яланах таса. | Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 36с. |
| | **Творчество ĕçĕ. Изложенисем** | |
| 48. | Изложени «Чанапа кăкшăм»<br>Чанан ĕçесси килнĕ. Картишĕнче шыв кăкшăмĕ ларнă. Анчах шывĕ кăкшăм тĕпĕнче çеç пулнă. Чана унта туртăнса çитеймен.<br>Вара чана кăкшăма вĕтĕ чулсем пăрахма пуçланă. Кăкшăмри шыв хăпарнă. Чана шыв ĕçсе тăраннă.<br>План.<br>1.Чанана шыв ĕçме мĕн чăрмантарнă? | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-39с. |

| | | |
|---|---|---|
| | 2. Вăл мĕн тума пултарнă?<br>3. Чана ĕçсе тăраннă-и? | |
| 74. | Изложени "Йытăпа унăн мĕлки"<br>Йытăпа унăн мĕлки Пĕр йытă шăмă тупнă. Каçма тăрăх шыв урлă каçать. Шывра йытă хăй мĕлкине курах каять. Çăварĕнчи шăмммине часрах пăрахать те хăпăлхапăл шыва сике парать. Лешĕн çăварĕнчи шăмма туртса илес тесе ĕнтĕ. Хăй çăварĕнчи шăммине çухатать çак тăмсай. Лешĕнне те илеймест.<br>План.<br>1. Йытă мĕн тупнă?<br>2. Вăл шывра мĕн курать?<br>3. Йытă çăварĕнчи шăммипе мĕн тăвать?<br>4. Хăй ăçта сикет?<br>5. Лешĕн шăммине илеет-и? | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-40с. |
| 89. | Тĕрĕслев изложенийĕ «Чĕрĕп»<br>Кĕркунне чĕрĕпшĕн апат сахалланать. Ăмансем çĕр айнелле анса каяççĕ. Шуçлак çĕленсем çук ĕнтĕ. Нăрăсемпе тăмсай шăнасене тупма та йывăр.<br>Кĕрхи уяр кунсенче чĕрĕп хĕл каçмалăх ăшă йăва хатĕрлет. Ватă тунката айĕнчи шăтăка типĕ çулçăсем, çемçе мăк тултарать.<br>Кĕçех чĕрĕп йăвине хĕл каçма кĕрсе выртать. Тепĕр çулччен ăна ăмансем те, нăрăсем те кирлĕ мар.<br>Хĕл ларать. Чĕрĕп шăтăкне хулăн кĕрт витсе лартать. Кĕрт айĕнче чĕрĕпе хулăн утиял айĕнчи пекех ăшă.<br>План.<br>1.Апат сахалланни.<br>2.Йăва хатĕрлени.<br>3.Чĕрĕп хĕл каçни. | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-50с. |
| 98. | Изложени «Ташă ăсти»<br>Нина ачасене пуçтарчĕ. Ял çыннисене концерт лартса пама сĕнчĕ. Ачасем хаваспах килĕшрĕç. Тăрăшса хатĕрленчĕç. Кĕтнĕ кун çитрĕ. Юля сăвă каларĕ. Валя юрă юрларĕ. Аля фокуссем кăтартрĕ. Аркаш чăваш ташшисем ташларĕ. Шкул пĕтерне хыççăн Аркаш малалла вĕренчĕ. Аслă пĕлӳ илчĕ. Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Чĕкеç пек çăмăллăн ташлать вăл. Пултарулăхне кура ăна Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ ятне пачĕç.<br>План.<br>1.Концерта хатĕрленни.<br>2.Концерт лартса пани.<br>3. Шкул хыççăн. | Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017.-51с. |

**<u>3 класс</u>**

**Чăваш чĕлхи.**

1. Диктант №1, «Авăн уйăхĕ», стр. 38. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.

2. Диктант №2, «Туслăх», стр. 51. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.
3. Диктант №3, «Çерçисем», стр. 57. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.
4. Диктант №4, «Кăлта çумăрĕ», стр. 61-62. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.
5. Диктант №5, «Кăмпара», стр. 67. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.
6. Диктант №6, «Сивĕ мучи», стр. 73. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.
7. Диктант №7, «Асаннене пулăшрăмăр», стр. 78. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.
8. Диктант №8, «Шуршăл ялĕ», стр. 82. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001.

1. Изложени №1, «Пиччĕшĕпе шăллĕ», стр.62. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.
2. Изложени №2, «Чĕрĕп», стр. 33, 64 хăн. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ. Виççĕмĕш класс валли. Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, А.Р. Кульева. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.
3. Изложени №3, «Çăкăр», стр.65. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.
4. Изложени №4, «Ватă тилĕ», стр.66. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.
5. Изложени №5, «Чаплă утарçă», стр. 113, 234 хăн. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ. Виççĕмĕш класс валли. Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, А.Р. Кульева. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.
6. Изложени №6, «Каюра», стр.67. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.
7. Изложени №7, «Алăсем», стр.79. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.

1) Çырса илни №1, «Туссем», стр.9, 13 хăн. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ. Виççĕмĕш класс валли. Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, А.Р. Кульева. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.

2) Çырса илни №2, «Ват асатте уявĕ», стр. 95-96, 199 хăн. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи. Вĕренӳ пособийĕ. Виççĕмĕш класс валли. Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, А.Р. Кульева. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.

**4 класс**

**Çырса илни.**

6 урок. Çырса илни. «Кăвакарчăн» 14 стр. Чăваш чĕлхи :4-мĕш класс валли/Ю. М. Виноградов, А.Р. Кульева.-Шупашкар:Чăваш кĕнеке изд-ви,2014

59 урок. Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. «Çăка»113 стр.Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001
95 урок. Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. «Çĕр – пуянлăх» 125 стр. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

**Диктант.**

21 урок. Тĕрĕслев диктанчĕ. «Хăяр татса пулăшни» 87 стр. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

26 урок. Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. «Мулкачсем».94 стр. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

39 урок. Диктант «Шăллăм». 97 стр. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

47 урок. Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант «Юман» 107 стр.Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

55 урок. Диктант «Кампур» 113 стр. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

79 урок. Диктант «Каçхи вăрманта» 164 стр. Чăваш чĕлхи :4-мĕш класс валли/Ю. М. Виноградов, А.Р. Кульева.-Шупашкар:Чăваш кĕнеке изд-ви,2014

98 урок. Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев диктанчĕ «Хĕвел».125 стр. Дмитриева Э.Ф., Эверскова Т.Г. Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. – Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд.-ви, 2001

**Изложени**

12 урок. Изложени «Сахăр» 79 стр.. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.

24 урок. Изложени. «Пăчи». 82 стр. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.
33 урок. Изложени. «Будка тăрринчи йăва».85-86 стр. Чăваш чĕлхи :4-мĕш класс валли/Ю. М. Виноградов, А.Р. Кульева.-Шупашкар:Чăваш кĕнеке изд-ви,2014

68 урок. Изложени. «Вăрмана кам лартать» 96 стр. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.

72 урок. Тĕрĕслев ĕçĕ. Изложени. «Карап ăсти» 96 стр. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.
92 урок. Изложени. «Сывлăшри тытăçу» 188 стр. Чăваш чĕлхи :4-мĕш класс валли/Ю. М. Виноградов, А.Р. Кульева.-Шупашкар:Чăваш кĕнеке изд-ви,2014

97 урок. Изложени. «Пăшипе пăрушĕ» 196 стр. Чăваш чĕлхи :4-мĕш класс валли/Ю. М. Виноградов, А.Р. Кульева.-Шупашкар:Чăваш кĕнеке изд-ви,2014

1. 99 урок. Тĕрĕслев ĕçĕ. Изложени. «Хĕвеллĕ çумăр» 96 стр. Артемьева Т.В., Печников О.И. Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли. – Шупашкар. Педагогикăпа психологи ăслăх тĕпчев институчĕн редакци издательство пайĕ, 2017.

Приложение к рабочей программе по
чувашскому языку
ООП НОО МБОУ «Новомуратская СОШ»

## Пуçламăш классенче чăваш чĕлхине вĕренекенсен пĕлĕвĕсемпе ăслай-хăнăхăвĕсене тĕрĕслесе хакламалли виçесем

***(Тăван чĕлхе программи: чăваш шкулĕн I-IV класĕсем валли/М.К.Волков, Л.П.Сергеев, Т.В.Артемьева, О.И.Печников, Р.Н.Петрова,Д.С.Филиппова.-Шупашкар:Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн изд-ви, 2008.-88с. ISBN 978-5-903218-16-5)***

**<u>Сăмахпа каласа хуравланине хакламалли виçесем</u>**

Сăмахпа каласа хуравлаттарни пуçламăш классенчи ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене хакламалли чи кирлĕ мелсенчен пĕри. Хуравăн çак енĕсене шута илмелле: а) вĕреннĕ материала туллин тата тĕрĕс каласа пани; ă) материала ăнланнин шайĕ; б) йĕркипе, çыхăнуллăн каласа пани, пуплев культури.
**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача программăри материала ăнланса, туллин, тĕрĕс пĕлнине кăтартать, хăй каланине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать; сăмахсемпе предложенисене хăй тĕллĕн тата тĕрĕс тишкерет, вĕрентӳçĕ сĕннĕ текстра халиччен вĕреннĕ грамматика пулăмĕсене, сăмахсене мĕнле çырмаллине, предложенири чарăну паллисен сăлтавне тĕрĕс ăнлантарать, йĕркипе, çыхăнуллă каласа хуравлать, пуплев йăнăшĕсем пачах тумасть е 1 йăнăшран ытла тумасть пулсан.
**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен хуравĕ «5» паллăпа хакламалли виçесене тивĕçтерет, анчах вăл правилăсене çирĕплетме илнĕ тĕслĕхсенче 1-2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех е вĕрентӳçĕ пулăшнипе çăмăллăнах тӳрлетет; каласа панă чух 1-2 пĕчĕк йăнăш тăвать пулсан.
**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен материа¬ла пĕтĕмĕшле ăнланать, анчах туллин хуравлаймасть, вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç каласа пама пултарать; текста тишкернĕ чух уйрăм йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентӳçĕ ыйтусем панипе çеç тӳрлетет; правилăсене харкам тĕллĕн тĕслĕхсемпе çирĕплетсе параймасть, ку ĕçе вĕрентӳçĕ хушма ыйтусем парсан çеç пурнăçлайрать; çыхăнуллă каласа параймасть, каласа панă чух темиçе йăнăш тăвать пулсан.
**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен материала пĕтĕмпех е унăн чи кирлĕ пайне пĕлмест, каласа панă тата текстпа ĕçленĕ чухне пысăк йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе те тӳрлетеймест пулсан.

**«1» паллă** çакăн пек чухне лартмалла: вĕренекен ача вĕреннĕ материала пачах та пĕлмест пулсан.

**Вĕреннĕ тĕп правилăсемпе** тата теори материалĕпе çыхăннă хăнăхтарусенче тунă йăнăшсем уйрăмах пысăк йăнăшсем шутланаççĕ. Вĕсен шутне правилăсене ăнланмасăр, чуххăмăн каласа пани, хăйсен тĕслĕхĕсемпе çирĕплетменни, калаçупа çырура усă курма пĕлменни кĕреççĕ. Паллаштарас тĕллевпе çеç программăна кĕртнĕ материала ача мĕнле пĕлнине тĕрĕслесе хаклама кирлĕ мар.

**<u>Çыру ĕçĕсене (таса та илемлĕ çырни, диктант) хакламалли виçесем</u>**

Ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене кулленхи тата пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕçĕсем ирттерсе хакламалла.

II—IV классенче куллен тата пĕтĕмĕшле ирттермелли тĕрĕслев çыру ĕçĕсем шутне çырса илни, тĕрлĕрен диктант (вĕсемпе пĕрлех пуплеве тишкермелли хушма ĕçсем те пулаççĕ), изложени кĕреççĕ.

I-IV классенче сочинени вĕрентмелле çеç çыртараççĕ. Чĕлхе тишкерĕвĕпе çыхăннă хушма ĕçсемпе пĕрле ирттернĕ çыру ĕçне икĕ паллăпа хаклаççĕ, пĕринпе –çырса илнишĕн, тепринпе – чĕлхе тишкерĕвĕшĕн.

II класран пуçласа таса та илемлĕ çырассин хăнăхăвĕсене те тĕрĕслесех тăмалла. Хаклас критерисен шутне каллиграфии çак виçисем кĕреççĕ, сас паллисен ĕлкисене пăсмасăр, уçăмлăн, пĕр пек виçеллĕ чалăштарса çырни, вĕсен çӳллĕшĕ тан пулни; йĕрсен хулăнăшĕ, сас паллисем, сăмахсем хушшинчи хушă пĕр пекки, яланах пĕрешкел тата çителĕклĕ хăвăртлăхпа çырни.

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ачан ĕçĕ каллиграфи нормисене тивĕçтерет, çырура пĕр-икĕ пысăках мар çитменлĕх пулма пултарать.

**«4» паллăçакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача çырăвĕ виçесенчен пĕрне тивĕçтермест (пĕрешкел чалăштарса çырман, сас паллисем, сăмахсем хушшинче пĕр пеклĕх çук т.ыт.те), 1-2 пысăках мар çитменлĕх пур.

**«3» паллăçакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен çырăвĕ каллиграфи виçисенчен 1-2-шне тивĕçтерейместt (сас паллисене пĕрешкел чалăштарманни, хăш-пĕр сас паллисен ĕлки уçăмлах марри, сас паллисен çӳллĕшĕпе хулăнăшĕ пĕрешкел марри т.ыт.те), 1-2 пысăках мар çитменлĕх пур.

**«2» паллăçакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ачан çырăвĕ каллиграфи виçисенчен чылайăшне тивĕçтермест.

«1» паллăçакăн пек чухне лартмалла: вĕренекен çырăвĕ питĕ тăрлавсăр, илемлĕ мар, унта тӳрлетнĕ, таса мар вырăнсем нумай.

Пысăках мар йăнăшсем шутне çаксем кереççе:

1) хăш-пĕр сас паллисене тĕрĕс мар çырни;
2) пысăк тата пĕчĕк сас паллисене пĕр йĕр çинче çырманни;
3) хăш-пĕр сас паллисене тĕрĕс çыхăнтарманни;
4) йĕртен çӳлелле е аялалла тухса çырни;
5) ытлашши шултра е вĕтĕçырни;
6) хăш-пĕр тĕлте сас паллисене пĕрешкел чалăштарса çырманни, сас паллисем, сăмахсем хушшинчи хушă пĕр пек пулманни;
7) хăш-пĕр сас паллисен тăрринчи паллăсене, çекĕлсене пăсса çырни.

Ача тунă чылай йăнăш ӳт-пӳ аталанăвĕпе çыхăннă пулсан, япăхрах çырнă ĕçе «3» паллăпа хакламалла.

Ку виçесемпе II класра таса та илемлĕçырмалли уроксенче пурнăçланăĕçсене тата II-IV классенче ятарласа ирттернĕ тĕрĕслев ĕçĕсене хаклаççĕ. Чăваш чĕлхи урокĕсенче таса та илемлĕçырма вĕренмелли минутсенче ирттернĕ пĕчĕк ĕçсене ятарлă паллăсемпе хакламаççĕ. Тĕрĕслев ĕçĕсене вăл е ку темăна вĕреннĕ май е вĕренсе пĕтерсен ирттереççĕ. Вĕсен шучĕ темăна вĕренес йывăрлăхран килет.

Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕçĕсене ытларах вĕренӳ чĕрĕкĕ, çур çулĕ вĕçĕнче (анчах юлашки кунсенче мар!) ирттереççĕ.

**Асăрхаттарни: пуçламăш классенче сочинени вĕренмелле çеç çыртараççĕ.**
Диктант çыртарма (çырса илтерме) ытларах чухне çыхăнуллă текст илмелле. Текстсем литература чĕлхин виçисене пăхăнмалла, ачасен тĕнче курăмне анлăлатма, вĕсене ăслă-тăнлă, ĕрет-несĕп енчен йĕркеллĕ ӳссе çитĕнме пулăшмалла, вăл е ку класра мĕн вĕреннине тивĕçтермелле.
II-IV классенче диктант тата çырса илмелли текст калăпăшĕ çакăн пек пулмалла:

| Классем | Чĕрĕксем | | | |
|---|---|---|---|---|
| | 1 | 2 | 3 | 4 |
| 2 | 20-25 | | 30-35 | |
| 3 | 35-40 | | 45-50 | |
| 4 | 50-55 | | 60-65 | |

Тĕрĕслев ĕçĕсем ирттермелли вăхăта çапларах уйăрмалла: I класра – 10-15 минут, II-IV классенче – 20-25 минут, хушма ĕçсемпе пĕрле: I класра – 25-30, II-IV классенче – 35-40 минут.
I класра çыру ĕçĕсене сăмахпа каласа çеç хаклаççĕ. Çырса илнинче ача 5 йăнăшран ытла туман пулсан, ку ĕç вăтам шутланать.

**<u>II-IV классенче диктанта çак виçепе хакламалла:</u>**

**«5» паллă  çакăн пек чухне лартмалла**: ача орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем пачах туман, орфограммăсене тӳрлетмен, каллиграфи виçисене пăхăнса (сас паллисен ĕлкисене уçăмлă, пĕрешкел чалăштарса т.ыт.те) çырнă, анчах уйрăм çитменлĕхсем (сиктерсе хăварнă  сас паллисене кĕртсе лартни, сас палли ĕлкине тӳрлетни т.ыт.те) пур пулсан.
**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла**: çыру ĕçĕнче орфографи йăнăшĕсем 2, пунктуаци йăнăшĕ 1 ытла мар, е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейлĕçырнă, анчах темиçе çĕрте калли¬графи виçисене тивĕçтермен, пĕр-пĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан.
**«3» паллăçакăн пек чухне лартмалла:** орфографипе пунк¬туаци йăнăшĕсем 6-ран ытла мар, диктантра (вариантсем) орфографи йăнăшĕсем 3-рен 5-е çити, пунктуаци йăнăшĕсем 3 таран, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнса çырман тата тĕрлĕ орфограммăна тӳрлетни 1-2 пулсан.
**«2» паллăçакăн пек чухне лартмалла**: диктантра орфографи йăнăшĕсем 6, пунктуаци йăнăшĕ 3-4-ран ытла, ĕçе тирпейсĕр, кал¬лиграфи виçисене пăхăнмасăр çырнă, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.
**Диктантра çаксене йăнăш тесе шутламалла:**
а) сăмаха орфографи правилисене пăсса çырни, сас паллисене сиктерсе хăварни, сас паллисене е сăмах сыпăкĕсене ылмаштарса лартни, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарни;
ă) вĕреннĕ правилăсене пĕлменнипе чарăну палли лартман е тĕрĕс мар лартнă пулсан.
**Диктантра çаксем йăнăш шутланмаççĕ:**
а) ку таранччен вĕренмен орфографи тата пунктуаци правилисемпе çыхăнман йăнăшсем (кун пек сăмахсене класс хăми çине çырса кăтартмалла);
ă) предложени вĕçĕнче пĕр хутчен пăнчă лартмасăр хăварнă, тепĕр предложени пуçламăшне пысăк сас паллипе çырнă пулсан;
б) текст шухăшне улăштармасăр пĕр сăмах вырăнне тепĕр сăмах улăштарса çырнă пĕр тĕслĕх кăна пулсан.
Çаксене пĕр йăнăш тесе шутламалла:
а) тĕрĕс мар çырнă сăмах икĕ е темиçе хутчен тĕл пулсан, çав правилăпа çыхăннă йăнăша тепĕр сăмахра та тунă пулсан, вĕсене пĕр йăнăш тесе шутламалла:
ă) пысăках мар икĕ çитменлĕхе (кăлтăка) пĕр йăнăш тесе шутламалла.

**<u>Текста çырса илнине хакламалли виçесем</u>**

Текста çырса илсе пурнăçламалли çыру ĕçĕсен шутне вĕренӳ кĕнекинчи тата класс хăми çине çырса панă хăнăхтарусем кĕреççĕ. Вĕсене ача мĕнле пурнăçланине çак таблицăри виçесене шута илсе çапларах хакламалла:

| Паллăсем | Орфографипе пунктуаци йăнăшĕсен шучĕ |
|---|---|

| | 2 класра | 3 класра | 4 класра |
|---|---|---|---|
| «5» | йăнăш çук | йăнăш çук | йăнăш çук |
| «4» | 1-2 йăнăш, 1 тӳрлетни | 1 йăнăш, 1 тӳрлетни | 1 йăнăш, 1 тӳрлетни |
| «3» | 3 йăнăш, 1 тӳрлетни | 2 йăнăш, 1 тӳрлетни | 2 йăнăш, 1 тӳрлетни |
| «2» | 4 йăнăш, 1-2 тӳрлетни | 3 йăнăш, 1-2 тӳрлетни | 3 йăнăш, 1-2 тӳрлетни |

**Словарь диктантне хакламалли виçесем.**

Словарь диктантне сăмахсене тĕрĕс çырма вĕрентес тĕллевпе куллен ирттермелле.
Сăмахсен пĕлтерĕшĕ ачасемшĕн ăнланмалла пултăр.
Словарь диктанчĕн калăпăшĕ çакăн пек пулмалла: II класра– 7 сăмах, III класра– 10-11 сăмах, IV класра– 12-14 сăмах.
Словарь диктантне çак виçесемпе хакламалла:
«5» паллă– диктантра 1 йăнăш та çук пулсан;
«4» паллă– диктантра 1 йăнăш, 1 тӳрлетни пулсан;
«3» паллă– диктантра 2 йăнăш, 1 тӳрлетни пулсан;
«2» паллă– диктантра 3-5 йăнăш пулсан.

Изложенисемпе сочиненисене хакламалли виçесем.

Вĕренекенсене шухăша çыхăнуллăн йĕркелесе çырма хăнăхтарас тесе II-IV классенче вĕрентсе çыртармалли сочиненисем кашни 2 эрнере пĕрре ирттермелле, кашни ĕçе çыртарма пĕрер сехет уйăрмалла.
II-III классенче тĕрĕслев изложенине вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче пĕрер, IV класра – пурĕ 2 ирттермелле.
Изложени тексчĕн калăпăшĕ диктантран 15-25 сăмах ытларах пулмалла.
II класра изложени тексчĕ калуллă, ансат пулмалла. III-IV классенче калуллă текста сăнлав тата уйлав элеменчĕсем кĕртеççĕ. Текстсем ачасене ăслă-тăнлă, таса чун-чĕреллĕӳссе çитĕнме пулăшаканнисем пулмалла.
Сочинени калăпăшĕ сахалтан та II- III классенче 8-9 предложени е 55-60 сăмах, IV класра 10-11 предложени (65-75 сăмах) таран пулмалла.
Сочинени теми пурнăçпа таччăн çыхăнтăр, ачасен кулленхи вĕренĕвне, ĕçне-хĕлне çывăх, вĕсене ăнланмалла пултăр, текста çыхăнуллă йĕркелесе çырма пулăштăр.
Изложение хакланă чухне вĕренекен ача автор текстне туллин (е кĕскен), тĕрĕс (факт йăнăшĕсемсĕр), шухăша пĕрин хыççăн тепри- не çыхăнуллă йĕркелесе, литература чĕлхин тата илемлĕ те тĕрĕс çырассин виçисене пăхăнса çырнине шута илмелле.
Сочинение хакланă чухне, кунсăр пуçне, текста темăпа тата планпа килĕшӳллĕçырнине, пуплев пуянлăхĕпе илемлĕхне (сăмахсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, эпитетсемпе, танлаштарусемпе меллĕн усă курнине, предложенисене тĕрĕс йĕркеленине т.ыт.те), уçăмлăн, таса та хитре çырнине асра тытаççĕ.
Орфографипе пунктуаци йăнăшĕсене шута илнĕ чухне диктанта хакламалли виçесене пăхăнмалла.
**Пултарулăх ĕçне (изложени тата сочинени) II-IV классенче пĕр паллăпа хакламалла;**
IV класра, сочинени калăпăшне тата ачасен çыхăнуллăçырăвĕн аталанăвне кура, икĕ паллăпа палăртмалла: пĕри – шухăшпа пуп- лев пуянлăхĕшĕн, иккĕмĕшĕ– сăмахсемпе предложенисене тĕрĕс çырма пĕлнĕшĕн.
Пĕтĕмĕшле илсен, изложенипе сочинение II-IV классенче çапла хакламалла:
**«5» паллă** – автор текстне тĕрĕс тата çыхăнуллăçырса кăтартнă (изложени), шухăш темăпа килĕшӳллĕн, çыхăнуллăн аталанса пы- рать, факт йăнăшĕсем çук, сăмах йышĕ пуян, пуплев тĕлĕшĕнчен текста тĕрĕс те палăртуллă хайланă пулсан.
Тĕрĕс çырнăшăн: орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем çук, 1-2 тӳрлетни пулма пултарать.
**«4» паллă** – автор текстне çителĕклĕ таран туллин çырса кă- тартман (изложени), темăна

уçса панă, анчах уйрăм вырăнсенче шухăш çыхăнăвĕ татăлса кайни, тĕрĕсех мар çырни тата пуплев çитменлĕхĕсем пур. Пуплев тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпе 3 йăнăшран ытла мар, содержанипе тунă йăнăшсем 3 таран пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: 2 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕнчен ытла мар е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ тунă, пĕр-пĕр орфог- раммăна тӳрлетни пур пулсан. (Вĕреннĕ правилăсемпе тунăйăнăшсене çеç шутламалла.)

**«3» паллă** – автор текстĕнчен кăштах пăрăннă (изложени), темăпа килĕшӳллĕ тата çыхăнуллăçырман, 2-3 предложение тĕрĕс- ех йĕркелеймен, сăмах йышĕ чухăн, пуплев тĕлĕшĕнчен çитменлĕх- сем пур, шухăш аталанăвĕнче (содержанире), текста йĕркелессинче тата пуплевре йăнăшсем пĕтĕмпе 5 таран пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: 3-5 орфографи йăнăшĕ таран, вариантсем: 3 орфографи, 2-3 пунктуаци йăнăшĕ, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ тунă, тĕрлĕ орфограммăсене тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă** –ĕçе тема тăрăх çырман, автор текстĕнчен чылай пăрăнса кайнă (изложени), текста тĕрĕсех мар ăнланнă вырăнсем (факт йăнăшĕсем) пур, йĕркеллĕ, çыхăнуллăçырман, уйрăм пайсем хушшинче çыхăнулăх çук, сăмах йышĕ чухăн. Текста тата пуплеве йĕркелес енĕпе 6 çитменлĕхпе йăнăшсем пур пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: орфографи йăнăшĕсем 6-ран, пунктуаци йăнăшĕсем 3-4-ран ытла, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

Асăрхаттарни: пултарулăх ĕçĕсене хакланă чухне таса та илемлĕçырнине, каллиграфи виçисене еплерех пăхăннине (диктанта пахаланă чухнехи пекех) шута илсе хакламалла.

## УЧЕБНО-МЕТОДИЧЕСКОЕ И МАТЕРИАЛЬНО-ТЕХНИЧЕСКОЕ ОБЕСПЕЧЕНИЕ

**Список рекомендуемой учебно-методической литературы**

- Çыру тетрачĕ 1, 2, 3, 4. «Чăваш букварĕ» тăрăх вулама-çырма вĕрентнĕ чух усă курмалла. Т. В. Артемьева, М. К. Волков, С. П. Русское. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2012.
- Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем: чăваш шкулĕн 1-4 класĕсем валли / М.К.Волков, Л.П.Сергеев, Т.В.Артемьева, О.И.Печников, А.Р.Кульева – Шупашкар: Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви, 2013. – 80 с.
- Чăваш букварĕ: 1-мĕш класс валли / Т.В.Артемьева, М.К. Волков, Л.П. Сергеев - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2007.
-Чăваш чĕлхи: 2-мĕш класс валли / Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьев, А.Р. Кульева, Ю.С. Семенов.- Шупашкар: Чăваш кĕнекĕ издательстви, 2007.
- Чăваш чĕлхи. Ĕç тетрачĕ. 2-мĕш класс вали / А.Р. Кульева, О.Г. Кульев. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.
- Чăваш чĕлхи: 3-мĕш класс валли / Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьев, А.Р. Кульева, Ю.С. Семенов.- Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2005.
- Чăваш чĕлхи. Ĕç тетрачĕ. 3-мĕш класс вали / А.Р. Кульева, О.Г. Кульев. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.
-Чăваш чĕлхи: 4-мĕш класс валли / Ю.М.Виноградов, А. Р. Кульева. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2007. – 207 с.
- Чăваш чĕлхи. Ĕç тетрачĕ. 4-мĕш класс вали / А.Р. Кульева, О.Г. Кульев. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2013.

**Дополнительная литература**

- Диктант пуххи. Пуçламăш классен учителĕсем валли. /Э. Ф. Дмитриева, Т. Г. Эверскова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2001. – 127 с.
- Изложени тексчĕсен пуххи. I-IV классем валли./Т. В. Артемьева, О. И. Печников. Шупашкар, 2017-100с.
- Комплект таблицисем.
- Русско-чувашский и чувашско-русский словарь. Для начальных классов. / М. И. Скворцов, А. В. Скворцова. - Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 2004.

- Тăван чĕлхе урокĕсем. 1 класс./ М. К.  Волков. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1989. – 175 с.
- Тăван чĕлхе урокĕсем. 3 класс./ М. К.  Волков. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1992. – 159 с.
- Тăван чĕлхе урокĕсем. 4 класс./ М. К.  Волков. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1993. – 175 с.
- Чăваш писателĕсен портречĕсем.